Валерий Туркай

## ЧĂВАШ ТУПИ

... Чăвашшăн чăваш — чи хаклă юлташ.
Юлташ кăна мар — тăван хурăнташ.

Эс пул академик,
Эс пул генерал,
Эс пул çĕр ĕçченĕ —
Тăван çĕр хуçи...
Çакна çеç ан ман эс,
Ан ман эс, чăваш:

Чăвашшăн чăваш — чи хаклă юлташ!
Чăвашшăн чăваш — тăван-хурăнташ!

Эс пул пысăк пуçлăх,
Пулсан эс кĕтӳç,
Эс пул çамрăк йĕкĕт,
Пулсан ватă çын...
Çакна çеç, çакна çеç
Ан ман эс, чăваш:

Чăвашшăн чăваш — чи хаклă юлташ!
Чăвашшăн чăваш — тăван-хурăнташ!
Чăвашшăн чăваш — чи çывăх юлташ!
Чăвашшăн чăваш — тăван-хурăнташ!

Çакна ăнлансассăн,
Çакна ĕненсен,
Кашни ыр чăваш
Çакăнпа килĕшсен,
Пиртен чĕрĕ халăх,
Пиртен вăйлă халăх,
Пиртен аслă халăх
Пулмасть Çĕр çинче!

Чăвашшăн чăваш — чи хаклă юлташ!
Чăвашшăн чăваш — тăван-хурăнташ!
Чăваш!
Çӳлти Турă упратăр сана!
Нихçан Сӳнми Çутă
Çутаттăр Çулна!

*çу уйăхĕ, 1991*

*Туркай, В. В.. Пурнатпăр-ха! / [В. Туркай] ; Николай Григорьев [пухса хатĕрленĕ]. -- Чебоксары : [Новое Время], 2012. - 409 с.* http://elbib.nbchr.ru/lib_files/0/kkni_0_0001265.pdf